Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

107 (7424) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи декабрĕн (раштав) 20-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

### Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

## Куллен ĕçе хутшăнать



*«Мĕн пурнăçлани малашлăха пăхтарать», - терĕ хамăр калаçăва пĕтĕмлетнĕ май “Хлебороб” ял хуçалăх производство кооперативĕнчи пĕрремĕш номерлĕ уй-хир бригадин ĕçченĕ Надежда Александровна Туркменбаева. Хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçлама хăнăхнă тата хăйсен ĕçĕ хуçалăх малашлăхĕшĕн пулнине куракан уй-хир ĕçченĕсем çапла каланине хирĕçлеме çук. Акă, “Хлебороб” хуçалăх кăçал обществăлла выльăх валли 400 ытла гектар çинчен нумай çул ӳсекен курăксене çулса апат хатĕрленĕ, пĕр çул ӳсекен курăксем 50 гектар пулнă. Мĕн пур курăкран вĕсем 300 тонна ытла утă, 1500 тонна сенаж хатĕрленĕ, вырма тапхăрĕ çитсен 320 гектар çинчи тырă-пулăна пуçтарса кĕртсе кĕлете хывнă, 95 гектар кĕрхи культурăсем акса хăварнă. Çак ĕçсем пĕр-ик çын вăй хунипе пулманни паллă. Кунта уй-хир бригадисен ĕçченĕсен тӳпи малтисен ретĕнче. Вĕсен йышĕнче эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Надежда Александровна Туркменбаева та.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

### Кам мĕнле ĕçлет?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КАШНИ ĔНЕРЕН ДЕКАБРĔН 19-МĔШĔНЧЕ ТАЛĂКРА ВĂТАМРАН МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (КИЛОГРАМПА).**

**Цифрăсен колонкисенче: 1.Кăçал сунă. 2. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан.**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| “Оринино” | 13,4 | 1,3 |
| Чкалов яч. хис. | 11,6 | 5,3 |
| “Свобода” | 11,4 | -0,8 |
| Суворов яч. хис. | 10,9 | 2,1 |
| Ленин яч. хис. | 10,5 | 3,3 |
| “Восток” | 10,5 | -0,5 |
| “Волга” | 10,5 | -1,6 |
| Ильич яч. хис. | 10,3 | 1,5 |
| “Герой” | 10,1 | -0,5 |
| КФХ Михайлов | 9,7 | 6,1 |
| “Ударник” | 9,7 | -0,2 |
| “Лидер” | 9,1 | -4,0 |
| КФХ Отенов | 7,8 | 5,7 |
| “Нива” | 7,6 | -2,1 |
| “Чемеево” | 6,8 | -2,8 |
| Чапаев яч. хис. | 6,4 | 0,1 |
| “Хлебороб” | 6,1 | -0,2 |
| Е.Андреев яч. хис. | 6,1 | -1,2 |
| “Сеятель” | 5,7 | 0,2 |
| “Передовик” | 5,5 | -1,2 |
| К. Иванов яч. хис. | 4,2 | 0,2 |
| “Рассвет” | 3,5 | -1,0 |
| Ытти КФХсем | 11,8 | 11,8 |
| **Районĕпе** | **8,9** | **0,3** |

### Раççейре

## Пенси çитес çул 15 процент ӳсет

Пенси 2007 çулта 15 процент ӳсмелле. Кун пирки РФ Пенси фончĕн правленийĕн председателĕ Геннадий Батанов пĕлтернĕ.

2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăтам пенси 437,9 тенкĕ ӳсмелле, 3276 тенкĕпе танлашмалла.

Г. Батанов палăртнă тăрăх пенси кăçал августăн 1-мĕшĕнчен 6 процент пысăкланнă.

Пенси фончĕн укçи пенси тӳлеме 28 млрд. тенкĕ чухлĕ çитменрен ăна федераллă укçа-тенкĕ шучĕпе саплаштарнă.

Сенаторсем Пенси фончĕн çитес çулхи бюджетне çирĕплетнĕ чухне Г. Батанова фонда тытса тăма каякан тăкаксене палăрмаллах чакарма хушнă.

### Спорт

## Хĕллехи биатлон енĕпе



**Декабрĕн 17-мĕшĕнче Австрири Хохфильцен хулинче хĕллехи биатлон енĕпе тĕнче кубокĕн 3-мĕш тапхăрĕ иртнĕ. Раççей пĕрлештернĕ команди шутĕнче 4х6 эстафета ăмăртăвне пирĕн ентеш, пĕтĕм тĕнчери спорт мастерĕ Татьяна Моисеева та хутшăннă. Вăл эстафетăн 2-мĕш тапхăрĕнче ăмăртнă. Раççей пĕрлештернĕ команди Французсем хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăннă.**

### Çивĕч ыйту

## Муркаш калаçмасть. Мĕншĕн?

***Кашни ытлари – эрне кунсенче районта пурăнакансем ĕçе утиччен районти радиовещани кăларăмĕнчен хамăр тăрăхри çĕнĕ хыпарсемпе паллашатчĕç. Çитес ытлари кун вара “Муркаш калаçмĕ”. Шупашкартан, Мускавран паракан радиокăларăмĕсене те пралук витĕр пыракан вещани урлă юлашки хут декабрĕн 25-мĕшĕнче итлеме пулать. Малалла вĕсене электросетьпе ĕçлекен радиоприемниксемпе итлемелле.***

***“Мĕншĕн пĕтереççĕ вара Муркаш радионе?”. Йăлтах йĕркеллехчĕ вĕт-ха?”. “Районта инвалидсем те, ватă çынсем те сахалах мар, вĕсем пур чухне те хаçат вулаймаççĕ вĕт-ха”. Çак шухăшсенче вырăнти радио пĕтет текен хыпар нумайăшне пăшăрхантарни палăрчĕ. Радио итлекенсен ыйтăвне эпĕ районти электроçыхăну узелĕн ертӳçине В.А. ТЕРЕХИНА патăм. Акă мĕнле хуравларĕ вăл?***

– Хамшăн та чуна ыраттаракан пулăм ку. 32 çул çак ĕçре вăй хунă май лини хуçалăхне те йĕркеллĕ тытса тăтăмăр. Хуçалăхсенче те радио ĕçлетчĕ. Ытти районсенче сахал пулнă кун пекки.

Районти радиовещани пирĕн районта чи юлашки пĕтет. Ытти районсенче тахçанах çук. Çак пулăм “Волгателеком” акционерсен уçă обществи пуçарнипе централизациленĕ майпа тапхăр-тапхăррăн пулса пычĕ. Пурнăç паян çĕнĕ мелсем çине куçма ыйтнă май, пралуклă вещани мораль тĕлĕшĕнчен кивелнĕ мел шутланса юлать. Çитменнине ăна тытса тăма та йывăрланма пуçларĕ. Юписене, пралукĕсене улăштармалла т.ыт. те. Хăй хаклăх пысăк, абонент тӳлевĕ вара çав тери пĕчĕк. Ăна та пулин çынсем уйăхĕ-уйăхĕпе тӳлемеççĕ. Пĕрерĕн-пĕрерĕн çитмелле çынсем патне.

Радио итлекенсем çав пĕчĕк суммăна – уйăхне 15 тенкĕне те тӳлесшĕн марччĕ. Çакă та япăх витĕм кӳчĕ пулĕ. Халĕ, акă, тата пралуклă вещанипе ĕçлекен 12 электромонтера “кĕскетме” тиврĕ.

**– Етĕрнере, уйрăм радиохумсем çине тухса, район радионе малашнехи кун-çул пачĕç. Пирĕн районта кун пек тума çук-и?**

– Етĕрне Шупашкартан, Мускавран паракан радиопередачăсене “çирĕп тытайман зона” шутланать. Çавăнпа та унта эксперимент майĕпе уйрăм программа çине тухмалла турĕç. Вăл программăна эпир кĕрсе юлма пултарайман, мĕншĕн тесен пирĕн районти радио итлекенсем пралуклă вещанипе Шупашкартан, Мускавран паракан передачăсене йĕркеллĕ итлеме пултарнă. Урăхла каласан, пирĕн район радио хумĕсене çирĕп тытакан зона шутланать.

**– Малашлăхра районта пурăнакансене Муркаш çĕнĕрен калаçма пултарасса шантарма пултаратăр-и?**

– Калама йывăр.

***Асăрхарăр пулĕ, хальлĕхе Муркаш ыран çĕнĕрен калаçма пуçлĕ текен шанăç çук. Пыра-киле лару-тăру, тен, уçăмланĕ. Хальлĕхе вара çакна çеç калама пулать. Районта пулса иртекен лару-тăрупа хальлĕхе пĕр “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçат урлă çеç паллашма пулать. Çавăнпа та районти кашни килтех паян район хаçатне çырăнса илмелле.***

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

### Культура хыпарĕсем

## Районта – 16 тĕслĕх библиотека



Тĕслĕх библиотекăсем информаципе культура центрĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсене хальхи техника хатĕрĕсемпе тивĕçтернĕ, Интернета тухма майсем пур. Пĕлӳ отраслĕсен кашни енĕпех информаци илме май пур. Ял тăрăхĕсен специалисчĕсем, ял хуçалăх ĕçченĕсем, педагогсем, студентсем, пенсионерсем библиотекăсенче хальхи актуаллă информацие илме, кирлĕ кĕнекене тупма пултараççĕ.

Библиотекăсенче çынсене право информацийĕпе тивĕçтерме майсем туса панă. Вĕсенче «Консультант Плюс» справкăпа право системи, «Законодательство России» информаципе право системи пур.

Эрне кун районти ача-пăча библиотекине пыракан ачасем ăна палласа та илеймерĕç пулĕ. Сăн-сăпачĕпе те тĕпренех улшăннăскер, тĕслĕх библиотека пулса тăчĕ. Çак шухăш хăех кунта ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политики тата архив ĕçĕн министерствинчен компьютерпа ытти тĕрлĕ оборудование 100 пин тенкĕлĕх вырнаçтарни пирки калать.

– Библиотека сирĕншĕн малашне пĕлӳ храмĕ пултăр, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Муркаш ачисене саламласа. – Кунта сирĕн аннĕрсемпе аçăрсем, асаннĕрсемпе асларăрсем çӳренĕ. Историллĕ вырăна упрăр. Мĕн кирлине тупса илĕр.

Çакна валли Юрий Александрович библиотекăна пĕр курупка диск парнелерĕ. Кирек хăш темăпа та халĕ тавракурăма анлăлатма пулать ĕнтĕ кунта.

Çамрăк вулакансене çавăн пекех район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин, Муркашри вăтам шкул директорĕ В.В. Ялушкин, унăн çумĕ Г.Л. Сидюшкина саламларĕç. Тĕслĕх библиотека ертӳçине Е.Н. Налимована библиотека валли парнесем илме те кăмăллă пулчĕ çав кун. 11 «а» класра вĕренекен Александр Петрова 8 «а» класри Оля Михайлова вара хăйсем шăрçаланă сăвă йĕркисенче пĕтĕм шкул ачин шухăшне каларĕç, тĕслĕх библиотека тахçанах кĕтнĕ парне пулнине пĕлтерчĕç.

Эрне кун уçăлнă виççĕмĕш тĕслĕх библиотека пулчĕ ку. Çав кун çак савăнăç Шетмĕпуçсемпе Ильинкăна та çитрĕ. Пĕр кун маларах вара Турайпа Тойкилтĕре те тĕслĕх библиотекăсем уçăлчĕç. Çапла вара районта 16 тĕслĕх библиотека ĕçлеме пуçларĕ. Çитес çул вĕсен йышĕ 30-а çитĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: тĕслĕх библиотекăсем уçăлчĕç районта.**



### Конкурс

## Манăн килти хушма хуçалăх

Ял çынни паян килти хушма хуçалăхпа пурăнать. Ку никамшăн та вăрттăнлăх мар. Юлашки вăхăтра патшалăх çакна ăнланса килти хушма хуçалăха аталантарасси çине тимлĕ пăхма пуçларĕ.

Акă, пирĕн районта кăçал килти хушма хуçалăха аталантарма 116706 пин тенкĕ çăмăллăхлă кредитсем панă.

Епле аталанать паян килти хушма хуçалăх? Ял çыннисене калаçăва чĕнетпĕр. Килти хушма хуçалăха тытса тăракансенчен çырусем кĕтетпĕр. Епле ĕçлесе пыратăр, йывăрлăхсене мĕнле çĕнтеретĕр? Тупăшлă ĕçлеме майсем пур-и? Ял çыннисем сире ăмсанмаççĕ-и? Текстпа пĕрле сăн ӳкерчĕксем пулсан тата аван.

Килти хушма хуçалăха ăнăçлă аталантарни çинчен калакан çырусене райхаçатра “Манăн килти хушма хуçалăх” рубрикăпа çитес çул уйăхран уйăха пичетлесе пырăпăр. Уйрăмах интереслĕ материал авторне хаклă парне – тĕслĕ телевизор - кĕтет. Парнене районти ял хуçалăх управленийĕ уйăрма пулчĕ.

Çĕнтерӳçĕне ятарлă комисси çитес çул вĕçĕнче палăртĕ. Комиссие район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов ертсе пырать.

Редакци.

### Юбилей

## Ентешĕмĕре чысласа

Муркаш çĕрĕ çинче сахал мар маттур ывăл-хĕр çуралса ӳснĕ. Вĕсенчен пĕри пулать те ĕнтĕ Спиридон Михайлович Михайлов-Янтуш. Вăл – чăвашсен пĕрремĕш этнографĕ, историкĕ тата писателĕ.

Спиридон Михайлов çуралнăранпа декабрĕн 16-мĕшĕнче 185 çул çитрĕ. Ентешĕмĕре халалланă мероприятисем ĕç планĕпе килĕшӳллĕн районта малалла пыраççĕ.

Районти тĕп библиотекăра “Халăхран тухнă талант” ятпа буклет хатĕрлеççĕ. Ача-пăча библиотекинче ятарласа хатĕрлекен “Талантлă тĕпчевçĕ, пултаруллă çыравçă” паллă та çамрăк вулакансене Спиридон Михайлов çинчен ытларах пĕлме май парĕ.

Спиридон Михайлов ячĕпе хисепленекен Юнкă шкулĕнче Спиридон Михайловичăн пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан музей йĕркелеççĕ. Районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт, социаллă аталану пайĕсем ачасем хушшинче конкурс ирттереççĕ. Вăл ачасем хамăр ентеше мĕн чухлĕ пĕлнине кăтартса парĕ. Декабрĕн 23-мĕшĕнче вара Юнкă шкулĕнче С.М. Михайлов 185 çул çитнине халалласа наукăпа практика конференцийĕ ирттереççĕ. Унта ЧР профессиллĕ писательсен союзĕн членĕсем, Чăваш патшалăх ăслăлăх наукисен институчĕн, Санкт-Петербургри туризмпа сервис институчĕн Шупашкарти филиалĕн представителĕсем хутшăнаççĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**